# Пăшалпа та, перопа та...



(1915-2009)

## Ржанов Василий Тимофеевич -

драматург, прозаик, публицист, Чăваш АССР культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Тăван çĕршыв Аслă вăрçи ветеранĕ çуралнăранпа

## 95 çул

# Василий Тимофеевич Ржанов

**- паллă чăваш писателĕ, драматург, очеркист, сатирик-фельетонçă, культурăн хастар деятелĕ, миршĕн чунне парса кĕрешекен.**



Василий Тимофеевич Социализмла Аслă революциччен икĕ çул маларах, 1915 - мĕш çулта, апрелĕн 16-мĕшĕнче çуралнă. Ачалăхĕпе çамрăклăхĕ унăн тăван ялĕнче, Чăваш АССРĕн Муркаш районне кĕрекен Вăрманкас Шашкарта иртнĕ.





1930-1931-мĕш çулсенче Ржанов Каршлăхри хресчен çамрăкĕсен шкулĕнче вĕренет. 16 çулхи яш каччă комсомола кĕрет, пухусемпе митингсенче колхозшăн хавхаланса калаçать.

Шкултан вĕренсе тухсан комсомолец хаçат ĕçне хастар хутшăнать, «Красная Чувашия» тата Мускавра тухса тăнă «Крестьянская газета» корреспонденчĕ пулса чылай вăй хурать.

1935-1937-мĕш çулсенче Василий Ржанов Мускавра «Крестьянская газета» çумĕнчи журналистсен аслă курсĕнче вĕренет. Ун хыççăн Шупашкарта «Красная Чувашия» хаçатра ĕçлет. Унтан вăл - Республикăри Халăх пултарулăх çурчĕн редакторĕ, каярахпа - директорĕ. Ĕçленĕ хушăрах А. Н. Островский ячĕпе хисепленекен театр интстутĕнче тата Горький ячĕпе хисепленекен литература институтĕнче вĕренет. 1940-мĕш çулта çирĕм пилĕк çулхи вăй питти çамрăка пысăк ĕçе - Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи искусство ĕçĕсен управленийĕн пуçлăхне лартаççĕ.



Вăрçă пуçăнсан В. Ржанов Тăван çĕршыва хӳтĕлеме тухса каять. Вăл - дивизи хаçачĕн корреспонденчĕ, каярах - полк агитаторĕ. 1942-мĕш йывăр çул вăл Комунистсен партине кĕрет. Паттăр çапăçнăшăн ăна Хĕрлĕ Ялав, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсемпе наградăлаççĕ.





Вăрçă пĕтесси нумай та юлман - Ржанов йывăр аманать. Госпитальсенче выртать .




Сывалса тăнă-тăман ăна каллех искусство ĕçне ертсе пыма хушаççĕ. Ăна 1947 çулта Чăваш АССР верховнăй Совечĕн депутатне суйлаçĕ. Çак вăхăтра вăл хăй те театр ĕçне хутшăнать, «Энтип» драма çырать, 1950 çулта ăна журналта пичетлесе кăларать.

Халăх пурнăçĕ çĕнĕ тапхăра куçнă вăхăтра, 1953-1956 çулсенче, В.Т. Ржановăн каллех журналист хастарлăхĕ çĕкленет. Вăл очерксем, фельетонсем, криткăлла статьясем пичетлет.

1955-1961-мĕш çулсенче Ржанов Халăх пултарулăх çурчĕн директорĕнче ĕçлет. Ку вăхăтра кĕслеçĕсен ансамблĕ, халăх инструменчĕсен оркестрĕ, ташă ансамблĕ йĕркеленеççĕ. Ялти кружоксем валли «Чаршав уçăлсан» пьесăсемпе юрăсен пуххисем, «Поет чувашский народ» кĕнеке тухаççĕ.

1969-1978 çулсенче писатель - республикăра миршĕн кĕрешес юхăма йĕркелсе ертсе пыракаснечен пĕри, мире хӳтĕлекен Чăваш комитечĕн ответлă секретарĕ. 1973-мĕш çулта вăл Пĕтĕм тĕнчери мире хутĕлекенсен конгресне кайма тивĕçлĕ пулать. Мире хӳтĕлекен Совет комитечĕ Ржанова «Миршĕн кĕрешекен» ятлă ылтăн медальпе, Петĕм тĕнчери Мир Совечĕ кĕмĕл медальпе наградăлать.









Василий Ржановăн драматург ăсталăхĕ уйрăмах «Энтип» драминче палăрать. Каярах ăна автор татах якатнă, юлашкинчен, 1968 çулта, «Тĕнче çаврăнать» ятпа кăларать.

1970-мĕш çулта Василий Ржанов «Своими глазами» ятлă очерксен пуххи кăларать. Ăна вырăсла çырнă: автор вăрçă вăхăтĕнче дивизи хаçатĕнче пичетленĕ очерксене пысăклатса, çĕнĕ аса илӳсем хушса, вăрçăн хăйне евĕрлĕ чĕрĕ дневникĕ тунă. Унта писатель, пĕтĕмĕшле илсен, хăй курни-илтнине, тӳссе ирттернине тĕпе хыват пулин те, вăл интереслĕ повесть пекех вуланать.






**Юлашки ҫулсенче Василий Тимофеевич Ржанов, фронтри пекех, миршĕн кĕрешнĕ. Чи йывăр вăрçă витĕр тухнă паттăр ҫын халăха яланах сыхă пулма чĕннĕ. Ăста драматург, хăюллă публицист, ҫивĕч сатирик общество пурнăҫĕпе ĕҫĕ-хĕлне, литература юхăмне хастаррăн хутшăннă, тăван халăх асне яланлăхах кĕрсе юлнă.**